Сăмах – пултаруллисене

Чун хушнипе, чĕре туртнипе

Вĕрентӳ ĕçĕ, воспитани парасси нихăçан та çăмăллисен шутĕнче пулман. Çак ĕçĕн пĕлтерĕшĕ вара юлашки вăхăтра палăрмаллах ӳсрĕ. Ачана пĕчĕкрен мĕнле воспитани парса ӳстернинчен, унăн пĕлӳпе ăсхакăл шайĕ мĕнле пулнинчен унăн хăйĕн пурнăç çулĕ килет кăна мар, çакă çĕршыв малашлăхĕпе те тӳрременех çыхăннă. Мĕншĕн тесен аслисен ĕçне çамрăксен малалла тăсмалла.

Çакна тĕпе хурсах ĕнтĕ вĕрентӳ ĕçĕ çине юлашки вăхăтра ытларах тимлĕх уйăрма тытăнчĕç. Çитес тапхăр валли йышăннă приоритетлă наци проекчĕсенчен пĕри те вĕрентӳ ĕçне аталантарса пырассипе, ăна палăрăмлă çĕнĕ шая çĕклессипе çыхăннă.

Кунпа пĕрлех вĕрентӳ, воспитани парас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăвакансене, çĕнĕ мелсемпе усă куракансене хавхалантарни, вĕсен ĕçне пропагандăлани те кирлĕ. Çав тĕллевпех ĕнтĕ кун пек хастар ĕçченсене Раççей Федерацийĕн Президенчĕ 100-шер пин тенкĕ парнесем парса хавхалантарчĕ. Пирĕн районтан виççĕн тивĕçрĕç ăна. Вĕсенчен пĕри – Турай шкулĕнче технологи предметне вĕрентекен Альбина Юрьевна ГЕРАСИМОВА. Район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ çак кунсенче пултаруллă педагогпа тĕл пулнă, хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ, ĕçре усă куракан çĕнĕлĕхсем пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтнă.

– 2005 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче Правительство членĕсемпе Федераллă Пуху членĕсем умĕнче сăмах каланă май РФ Президенчĕ Владимир Путин вĕрентӳ ĕçĕнчи приоритетллă наци проекчĕ пирки пĕлтерчĕ. Ку енĕпе тĕп пĕлтерĕшли инноваци тытăмĕ пулса тăрать. Проектăн тĕп задачисенчен пĕри – конкурс тытăмĕ çинче чи пултаруллă учительсене хавхалантарса пырасси. Ытти учительсемпе пĕрлех эпĕ те РФ Президенчĕн парнине тивĕçрĕм. Çак конкурсра мала тухма мĕн пулăшрĕ-ха мана?

Технологи урокĕсене эпĕ 8 çул ĕнтĕ ертсе пыратăп. Ку вăл хăйне евĕр предмет. Технологи урокĕсене хĕр ачасем мĕншĕн юратаççĕ-ха? Мĕншĕн тесен ку уроксенче вĕренекенсене хăйсен пултарулăхне кăтартма майсем ытларах. Тунсăхлама ку уроксенче никамăн та вăхăт çук тенĕ пулăттăм. Кашни вĕренекен урок тăршшĕпех ĕçпе çыхăннă. Пурте хавхаланаллă кăмăл-туйăмпа ĕçлеççĕ. Мĕншĕн тесен мастерскойра ĕçлесе илнĕ пĕлӳпе ăсталăх хĕрсене пурнăçăн анлă çулĕнче кирлĕ пулатех. Çитменнине вĕсем пурте – пулас кил хуçи хĕрарăмĕсем. Çак уроксенче илнĕ ăсталăхпа пĕлӳ вара вĕсене хăйсен кил-çуртне хăтлăрах та илемлĕрех тума, çемье бюджетне тĕрĕс шутласа палăртма, хăйсене хăйсем лайăхрах пĕлме пулăшăç.

Мана хамăн вĕренекенсемпе ĕçлеме килĕшет. Асăрхатăн та, шанманлăх, иккĕленӳлĕх туйăмĕнчен ăнтăлу, интерес туртăмĕ аталанать, вĕсем ăсталанă хатĕр пысăк хака тивĕçсен вара хĕр ачасен куçĕсем савăнăç туйăмĕпе тулаççĕ. Çапла вара вĕсем кунранкун пурнăçăн анлă çулĕпе утма лайăхрах хăнăхса пыраççĕ, вĕсем ĕнтĕ хӳтлĕхсĕр мар, кашнийĕнех усă курма çителĕклĕ таран пĕлӳпе ăсталăх запасĕ пур.

Паллă ĕнтĕ, пултарулăхсăр ачасем пулмаççĕ. Вĕсене хăйсен енĕсене аталантарма вăхăтра майсем туса памалла тата пулăшмалла. Майсем вара кашнийĕнех расна. Пĕри, калăпăр, çур сăмахранах ăнкарса илет, тепринпе вара çăмăл та ансат шутлакан ĕçе пурнăçлама хăнăхтарма сехечĕ-сехечĕпе ларма тивет. Анчах та хыççăнхи савăнăç туйăмне сăмахпа каласа пама йывăр. Хĕр ача пĕр рет çыхни, хăйĕн пĕрремĕш изделине хатĕрлени уншăн темрен те паха.

Вĕренекенсене кирек епле ĕçе те ăс-тăнпа шутласа пурнăçлама кирлине, пуçаруллă пулмаллине, йывăрлăхсенчен хăрамалла марине, кунсăр пуçне тата пуçланă ĕçе вĕçне çитермеллине ăша хывтарма тăрăшатăп. Проектсен мелĕ çакна валли лайăх майсем уçса парать.

Хальхи технологисем хушшинче юлашки çулсенче вĕренекенсемпе туса ирттерекен вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче проект ĕçĕ-хĕлĕ сумлăраххи те туллиреххи пулса тăрать. Çавăнпа та эпĕ 2000 çултан тытăнса 2004 çулччен «Технологи урокĕсенче проект меслечĕпе усă курасси» проблемăна тĕпе хурса ĕçлерĕм.

Проектсен меслечĕ мĕнпе палăрса тăрать-ха. Вĕренĕве çакăн пек йĕркеленĕ май ачасем практикăлла заданисем – проектсем – палăртнă тата пурнăçланă тапхăрта пĕлӳ илеççĕ. Ачасем тĕрлĕ предметсемпе тата тĕрлĕ тапхăрта илнĕ пĕлӳпе ăсталăха ĕçре çирĕплетсе хăвараççĕ. Ман шутпа, ку питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çĕнĕ вăхăт çĕнĕ ыйтусем кăларса тăратать. Социаллă тата наукăпа техника прогресĕн требованийĕсемпе килĕшӳллĕн çынсене кирлĕ тата ыйтакан хатĕрсен творчествăлла проекчĕсене хатĕрлес пулсан, предпринимательство ĕçĕхĕлĕн пĕлĕвĕсемпе ăсталăхĕ те кирлех. Ку вара вĕрентӳ содержанине кăна мар, унăн мелĕсене те улăштарать. Кун пек чухне çĕнĕ экономикăпа социаллă условисене хăнăхса пыни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Калăпăр, хăйсен творчество проектне хатĕрленĕ чух вĕренекенсен экономика расчечĕпе те интересленсе пăхма тивет: ку е вăл изделие хатĕрлеме мĕн чухлĕ укçа тăкакланать, мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ, ăна массăллă майпа туса кăларма тытăнасси, сутлăх хакĕ т. ыт. те. Проект мелĕпе усă курса ачасем задачăна татса парассин пĕтĕм технологине ыйтăва лартассинчен тытăнса юлашки результатсемчченех алла илеççĕ.

Проектсем пурнăçлассин системин уйрăмлăхĕ вăл учительпе вĕренекенĕн пĕрлехи творчествăлла ĕçĕ пулса тăрать. Творчество проектне пурнăçа кĕртесси манăн учитель позицине те тĕпренех улăштарчĕ. Эпĕ хатĕр пĕлĕве вĕренекенсем патне çитерекенрен ачасем пĕлӳ тĕнчипе хăйсем тĕллĕн утассине йĕркелесе пыраканĕ пулса тăтăм. Хам ĕçре эпĕ çак принципсене тĕпе хуратăп:

- вĕренекенсене кирлĕ информаци çăл куçне тупма пулăшатăп;
- хам та информаци çăл куçĕ пулса тăратăп;
- пĕтĕм процеса йĕркелесе ертсе пыратăп;
- вĕренекенсем проект тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлеччĕр тесе татти-сыпписĕр пĕтĕмĕшле çыхăнăва йĕркелесе пыратăп.

Проекта пурнăçа кĕртессинчи йывăрлăхсенчен çакна палăртса хăвармалла. Кашни вĕренекенпе уйрăмшаррăн ĕçлеме вăхăт чылай каять. Проектсем тĕлĕшпе ĕçлени мана учителĕн пултарулăх анлăшĕпе туллинрех усă курма май пачĕ. Кунпа пĕрлех тата вĕрентĕвĕн проект мелĕпе усă курнă май умри задачăсем те кăткăсланчĕç. Хамăн ĕçе йĕркелесе пынă май манăн ĕç тĕллевĕсемпе тапхăрĕсене тĕплĕн палăртма тивет. Вĕсем хăй енчен çул çитмен çамрăкăн творчество пултарулăхĕпе пуçарулăхне аталантарма пулăшаççĕ. Кунсăр пуçне тата манăн проектсен тематикипе хамăн пĕлĕве ӳстерсе пымасăр та май çук. Пĕрлехи ĕçре «вылякан тренер» вырăнĕнче пулма тивет.

«Технологи урокĕсенче проектсен мелĕпе усă курасси» проблемăна татса парассипе ĕçленĕ май çамрăк техниксен районти станцийĕн ертӳçи Африкан Вениаминович Андреев тата директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Светлана Владимировна Павлова, Надежда Владиславовна Филиппова методист пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем методика пулăшăвĕ панă кăна мар, халĕ те пысăк усă кӳреççĕ, проект тĕлĕшпе ĕçлеме ачасене хавхалантарса пыраççĕ. Унăн усси те çук мар. Олимпиадăсенче, районти тата республикăри конкурссенче манăн вĕренекенсем призлă вырăнсене тивĕçни те çавна лайăх çирĕплетет.

«Технологи» вĕрентӳ облаçĕнче проект ĕçĕ-хĕлĕ класпа урок системишĕн усăллă альтернатива пулса тăрать. Анчах та вăл ăна пачах хĕссе кăларма тивĕç мар. Проект мелĕпе вĕрентӳ процесне йĕркелессипе пысăк опыт пухнă çĕршывсен специалисчĕсем ку мелпе ытти вĕрентӳ мелĕсемпе пĕрле усă курмалла тесе шутлаççĕ. Çак меле анлăрах сарассипе тĕп проблема халĕ вара – проект заданийĕсене вĕрентӳ стандартчĕсен требованийĕсемпе çыхăнтарасси. Вĕренекенсем илекен стандартлă пĕлӳпе ăсталăх шайне кура проект заданийĕсене йĕркелеме çăмăл мар. Çавна май ку ыйтусемпе малашне те çине тăрса ĕçлени кирлĕ. Ӳн чухне пахалăхлă вĕренӳ шайне татах çӳллĕрех пусăма çĕклеме май килĕ.

Чуманкасси шкулĕнчен хыпарлаççĕ

Çанă тавăрсах ĕçлерĕмĕр

Кĕрхи çанталăк пире валли çумăрне те шеллемерĕ, хĕвел ăшшине те пачĕ. Канса илме вăхăт тупăнсах тăчĕ, анчах çанă тавăрса ĕçлемелли кунсем те сахал мар пулчĕç.

Шкул пахчинчи çимĕçсене пуçтарса кĕртнипе пĕрлех эпир, Чуманкасси шкулĕнче ĕçлекен учительсемпе ачасем, "Ударник", Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенчи çĕр улми уйĕсенче тăрăшрăмăр. Ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртса, çав хушăрах пĕр-пĕрне пулăшса пычĕç. Учительсемпе юнашар çĕр улми пуçтарнă чух вара вĕсем ывăнасси пирки мансах каятчĕç. Михĕсем çителĕклĕ пулччăр тата поварсем тутлă апат пĕçерсе çитерччĕр çеç. Ĕçлеме пĕрре те ӳркенмеççĕ ачасем. Уйсене кайнă чух яланах савăк кăмăлпа ларатчĕç шкул автобусĕ çине. Вырăна çитсен те: "Миçе касă кăларса хунă-ха пире валли?" – тесе интерес-ленетчĕç. Каннă чухне интереслĕ вăйăсем вылятчĕç.

Паллах, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăха эпир ытларах пулăшрăмăр. Иртнĕ çул та хуçалăх ертӳçи В.П. Морозов тăрăшса ĕçленĕшĕн ачасене асăнмалăх парнесем панăччĕ. Вĕренекенсем манман ăна. Кăçал та шанаççĕ-ха вĕсем Анатолий Пименовича. Вăл ачасене ĕç вăхăтĕнче канфетсемпе, напитокпа, тутлă пан улмисемпе сăйлама та манмасть. Çавăнпах пулĕ тăван хуçалăхра вĕренекенсем пурĕ 300 тонна майлă çĕр улми пухса илме вăй çитерчĕç. "Ударникра" – 157 тонна, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра 147 тонна яхăн "иккĕмĕш çăкăра" пуçтарчĕç. "Пĕлтĕрхинчен те лайăхрах ĕçленĕ эпир!" – савăннине пытармаççĕ ачасем.

Апла пулсан, хĕл каçмашкăн шкулта çĕр улми çителĕклĕ хатĕрлерĕмĕр, шкул бюджетне те пуянлатма пулăшрăмăр.

Н. НИКОЛАЕВА,
Чуманкасси шкулĕнчи аслă вожатăй.

Хаваслăн паллă турăмăр

Кĕрхи уйăхсем улшăнуллă çанталăкпа, уй-хирти, пахчари ĕçсемпе тата тĕрлĕ уявсемпе пуян. Вĕсенчен пĕри – Учительсен кунĕ. Çак куна, ман шутпа, пурте савăнса, пăлханса кĕтсе илеççĕ, мĕншĕн тесен кашни çыннăн пурнăçĕнче питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать.

Çак кун ирех çумăр çурĕ пулин те, Чуманкасси учителĕсен чунĕсенче сарă хĕвел пăхрĕ пулĕ. Вĕсене ачасем ирпе шкул алăкĕ патĕнчех чечек çыххисемпе, ăшă сăмахсемпе кĕтсе илчĕç, уяв ячĕпе саламларĕç.

Уяв кунĕнче учительсем вырăнне вунпĕрмĕш класс ачисем вĕрентни пуриншĕн те кĕтменлĕх пулчĕ. Каччăсемпе хĕрсем уроксене интереслĕ ирттернине палăртрĕç ытти шкул ачисем. "Хăйсене урокра чăн-чăн учительсем пекех тытрĕç", – тесе каларĕç нумайăшĕ уроксем хыççăн. Çакă уйрăмах вĕрентекенсене савăнтарчĕ.

Ултă урок пĕтсен ачасем учительсене концерт лартса пачĕç. Малтанах шкул директорĕ В.М. Васильев пурне те уяв ячĕпе саламларĕ, ăнăçусем сунчĕ, чи тăрăшуллă вĕрентекенсене тав çырăвĕсем пачĕ.

Уява педагогика ĕçĕн ветеранĕсем килни пурне те савăнтарчĕ. З.Н. Кадыкова, И.Д. Вязов, Т.Н. Вязова, А.Н. Николаева çамрăк ăрăва тарăн пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн нумай çул хушши вăй хунă. Паян эпир вĕсем умĕнче пуç таятпăр, пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Ветерансем хăйсене манманшăн тав турĕç, ачасене лайăх вĕренме, учительсене творчествăлла ăнăçусем сунчĕç.

Юрă-ташăпа, сăвă-кулăпа янрарĕ кăна Чуманкасси шкулĕ çак кун. Тĕрлĕрен парнесем парса савăнтарчĕç учительсене ачасем.

Çак кун вĕрентекенсем эпир вĕсене чăнласах чунтанах юратнине, хисепленине, вĕсем пирĕншĕн иккĕмĕш аттеанне пулнине курса ĕненчĕç, чунĕсемпе туйрĕç пулĕ тетĕп. Ку вара темле парнерен те хаклăрах.

ОЛЯ ПАВЛОВА,
Чуманкасси шкулĕ, 9-мĕш класс.

Çарпа патриотика клубĕ

Телейлĕ çул сана, «Родина»!

Çак кунсенче Муркашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта çарпа патриотика клубне йĕркелерĕç. «Родина» ятлă вăл. Çавна халалласа малтанах шкул стадионĕнче пушарпа прикладной тата çарпа прикладной спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Районти шкулсенчен пухăннă пултаруллă та хастар яшсемпе хĕрсем тĕрлĕ енпе вăй виçрĕç. Кунта пушар машинин пăрăхĕсене хăвăртрах сыпăнтарса пушар сӳнтерме хатĕрлесе çитересси те, пневматикăллă винтовкăран тĕл пересси те, Калашников автоматне сӳтсе пуçтарасси те, автомат магазинне патронсем тултарасси те, турник çинче алă вăйĕпе туртăнасси те, кире пуканĕ çĕклесси те.

Çавна каласа хăвармалла. Ăмăртусене хутшăнакансенчен чылайăшĕ хăйсене лайăх енчен кăтартса пачĕ. Вăй-хал, çирĕплĕх, чăтăмлăх тĕлĕшпе хăйсене малашнехи пурнăç валли хатĕрлекенсем иксĕлменни савăнтарать. Çар ретне тăма хатĕрленекен яшсемшĕн вара ку пушшех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çарпа патриотика клубне йĕркеленĕ ятпа савăнăçлă мероприяти шкулăн актовăй залĕнче иртрĕ. Малтанах çак клубăн ертӳçи В.Г. Львов сăмах илчĕ. Клуб йĕркеленĕ ятпа вăл пурне те саламларĕ, ку клуб яшсемпе хĕрсен пултарулăхне, ăсталăхне, тăрăшулăхне ӳстерсе пырассипе пысăк вырăн йышăнассине палăртрĕ.

Шкул ачисене çарпа патриотика клубĕ уçăлнă ятпа саламлама район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та килнĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çакăн çинче чарăнса тăчĕ. Тăван çĕршыв кащнийĕнех пулнă, пулĕ те. Ăна сыхлама, хӳтĕлеме кашнийĕнех хатĕр пулмалла. Камран тĕслĕх илмеллисем вара районта çук мар. Совет Союзĕн Геройĕсем пиллĕкĕн, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ, Социализмла Ĕç Геройĕсем иккĕн, Раççей Геройĕсем иккĕн пирĕн районтан тухнă. Çакăн пек пултаруллă та хастар çынсем воспитани парса ӳстерессипе çарпа патриотика клубĕ пысăк вырăн йышăнма тивĕç. Юрий Александрович клуба парне – палатка пачĕ.

РОСТО–ДОСААФ республикăри организацийĕн канашĕн председателĕн çумĕ А.А. Золотов та Муркаш шкулне парнесĕр килмен. Вăл çарпа патриотика клубне парашют парнелерĕ.

– Тӳпере çăлтăрсем сахал мар, анчах та «Родина» клуб – тӳпери çĕнĕ çăлтăр,- палăртрĕ вăл.– Унăн малашнехи ӳсĕмĕсем те сулмаклă пулĕç. Çавăн пекех А.А. Золотов çарпа патриотика клубĕн ертӳçине В.Г. Львова Хисеп грамоти парса хавхалантарчĕ.

Çĕнĕ çарпа патриотика клубĕ уçăлнă ятпа район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов та сăмах каларĕ, çĕнĕ ĕçре ăнăçусем сунчĕ.

Ăмăрту çĕнтерӳçисене палăртрĕç. Пур йышши ăмăртусене те шута илсен, пĕрремĕш вырăна Муркаш шкулĕ тивĕçни паллă пулчĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Москакассипе Мăн Сĕнтĕр шкулĕсен командисем.

Хыççăн савăнăçлă ларутăрура район пуçлăхне Ю.А. Иванова, РОСТО–ДОСААФ республикăри организацийĕн канашĕн председателĕн çумне А.А. Золотова, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçине Л.И. Мочалова Муркаш шкулĕнчи пуçласа йĕркеленнĕ «Родина» çарпа патриотика клубĕн хисеплĕ членне йышăнчĕç.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕксенче: ăмăрту саманчĕсем.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.